# САМАНА САССИЛЛĔ ПОЭТ

Александр Галкин — чăвашсен хальхи вăхăтри паллă поэчĕ. Кăçал вăл аллă çул тултарчĕ. Аллă çул — паллă çул. Сăвăç хăйĕн çак юбилейне ырми-канми ĕçпе, пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕ. Унăн пултарулăхĕ юлашки çулсенче уйрăмах аслăланса кайрĕ: ăсталăхĕ ӳсрĕ, таланчĕ çирĕпленчĕ, кашни произведенийĕ, кашни кĕнеки вулакансемшĕн кĕтнĕ ырă парне, чуна савăнтармалли паха ĕç пулса тăчĕ.

Александр Галкин 1928 çулта, февралĕн 12-мĕшĕнче çуралнă. Унăн тăван ялĕ — Чулкаç. Вăл Элĕк районне кĕрет, йăмраллă Сурăм шывĕ хĕрринче сарăлса ларать... Çакăнта ӳснĕ пулас поэт. Ачалăхĕ унăн çăмăл килмен, вунвиççе çитсен иккĕмĕш тĕнче вăрçи тапраннă, выçăллă-тутăллă пулсан та, вăрçа тухса кайнă арçынсем вырăнне ĕçлеме тивнĕ. Çав хушăрах шкула та çӳренĕ. Педучилище хыççăн тĕрлĕрен институтсенче вĕренсе пăхнă, анчах поэт чун-чĕриллĕ çамрăка вĕсем çырлахтарайман. Юлашкинчен вăл пединститута литература факультетне вĕренме кĕнĕ. Унтан вĕренсе тухсан, издательствăра редакторта ĕçлеме тытăннă. Унччен сăвăсем çырнăскер (унăн пĕрремĕш ĕçĕ 1948 çулта район хаçатĕнче тухнă), кунта А. Галкин литература лавне нихçанхинчен те ытларах кӳлĕннĕ. Çине-çинех сăвăсем, юптарусем, калавсем çырнă, поэзи çуначĕпеле çĕкленсе, редакци ĕçĕпе туптанса, ăсталăха алла илсе пынă. 1958 çулта вара «Пĕчĕк ĕçченсем» ятлă пĕрремĕш кĕнеки тухнă. Âна пирĕн çамрăк вулакансем хапăл туса кĕтсе илнĕ.

Унтанпа ĕнтĕ Александр Галкин çирĕме яхăн кĕнеке кăларчĕ: «Сурăм шарлакĕсем», «Хăрушă тĕлĕк», «Хаваслă ачасем», «Утнăçемĕн уçăлать çул-йĕр», «Юптарусем», «Хĕвел тухсан», «Çунатлă улăп», «Шӳтлесе мар...» тата ыттисем те. Вулакансем вĕсене пурне те кăмăлласа йышăнчĕç, лайăх хак пачĕç. Поэтăн вырăсла тухнă «Карикатуры с натуры», «Слезы дождя», «Смех не для всех», «Я и мои друзья» кĕнекисем те вулакансене килĕшрĕç.

Александр Галкинăн сăввисемпе юптарăвĕ-

сем, калавӗсемпе шӳчӗсем Мускавра та пичетленеççӗ, вӗсене украина, белорус, пушкӑрт, мари, тутар, удмурт, мӑкшӑ, авар, даргин, лезгин, чех, поляк тата ытти чӗлхесене те куçарнӑ.

Александр Галкин — ӑста лирик.

Унӑн лирикӑллӑ сӑввисем шӑнкӑр шыв пек янӑравлӑ, кӗвӗллӗ те илемлӗ. Ахальтен мар ӗнтӗ композиторсем сӑвӑçӑн сӑввисемпе утмӑла яхӑн юрӑ çырнӑ. Вӗсене пирӗн халӑх юратса юрлать, ырӑ кӗвӗ-сӑвӑпа хӑйӗн чун чӗрине çӗклентерсе хавхаланать.

Поэт лирикӑллӑ сӑвӑсем çеç мар, шӳтпе кулӑш, питлевпе тиркев произведенийӗсем те пайтах çырать, пурнӑçри тӗрлӗрен йӑх-яхсене тӑрӑ шыв çине кӑларать, вӗсенчен тӑрӑхласа кулать, типӗ мунча кӗртет, шӳтлесе мар, чӑнласах вӗтет. Унӑн шӳчӗ-кулӑшӗ, тиркевӗ-питлевӗ уçӑмлӑ, çивчӗ, сӑнарлӑ. Вӗсем кама пырса тивни тӳрех паллӑ. Александр Галкин вӑл-ку япала пирки, хӑшпӗр питлевçӗсемпе кулӑшçӑсем пек, калас-и, калас мар-и, тесе тӑмасть, сӑмах тупсӑмне ӑнлантарма аякка кайса, çавра çулсем шырамасть, тӳррӗнех калать, тин шӑратса хӑйранӑ хӗçпе каснӑ пек касать. Поэт пархатарсӑр, юрӑхсӑр геройсене тӗрлӗ ситуацире кӑларса тӑратма пӗлет, час-часах «ырӑ сӑнар — ырӑ ӗç, усал сӑнар — усал ӗç» йышши танлаштару меслечӗпе усӑ курать, çакна пула унӑн произведенийӗсем вулаканӑн асӗнче уйрӑмах палӑрса юлаççӗ. Унӑн шӳтпе питлев произведенийӗсене вуланӑ май эпир хамӑрӑн ырӑ пурнӑçра тӗл пулакан йӑх-яхсене, тӗрлӗрен «кӗрхи шӑнасене», пурнӑç каяшӗсене сасартӑках курма тытӑнатпӑр, вӗсем çут тӗнчере пурришӗн тарӑхатпӑр, малашне вӗсемпе çине тӑрсах кӗрешмеллине ӑнланса илетпӗр, кӗрешме тытӑнатпӑр. Çакӑ паха та ӗнтӗ. Сӑвӑçӑн юбилей умӗн çеç тухнӑ «Шӳтлесе мар...» кӗнеки çав енӗпе уйрӑмах палӑрса тӑрать, ахальтен мар çак сӑвӑсемпе шӳтсен пуххин пахалӑхне пирӗн критиксем пӗр сасӑллӑ пулсах çирӗплетрӗç.

Александр Галкин вырӑс тата ытти тӑванла халӑх писателӗсен произведенийӗсене чӑвашла куçарас тӗлӗшпе те питӗ нумай ӗçлет. Вӑл М. Горький, А. Серафимович, К. Станюкович,

Т. Шевченко, С. Есенин, М. Пришвин, Б. Житков, В. Бианки, А. Арсеньев, М. Шолохов, С. Михалков, С. Баруздин, М. Прилежаева тата ыттисен кĕнекисене чăваш вулаканĕсем патне çитерчĕ. Вĕсем пурте чăвашла çырнă пекех вуланаççĕ.

Сăвăç проза çырма тытăнни литературăна пĕлсе хаклакансене яланах хавхалантарать. Александр Галкин та юлашки çулсенче проза жанрĕнче питĕ ăнăçлă ĕçлерĕ, 1975 çулта çамрăк вулакансене валли «Хаваслă ачасем» ятлă хулăм кĕнеке кăларчĕ.

Ача-пăча тĕнчи — аслă та хăйне евĕрлĕ тĕнче. Ăна ăста çырма художник пулни çеç çителĕксĕр, писателĕн çивчĕ куçлă педагог та, шухăшлавçă та пулмалла, кирлĕ çĕрте унăн ачасем пек калаçмалла, тепĕр çĕрте тата ватă çын пек ăс пама та чухламалла. Александр Галкин çаксене лайăх пĕлет: вăл хăйĕн асăннă кĕнекине пĕтĕмпех çав карта лартса çырнă. Автор пĕчĕк калавсенчех кăсăк сюжетсем тăвать, лару-тăрусене пурнăçри пулăмсемпе тачă çыхăнтарать, ачасен характерĕсене уçăмлăн кăтартса парать. Çавăнпах-и, вуланă май эпир кĕнеке геройĕсемпе пĕрле кирлĕ çĕрте кулянатпăр та, кирлĕ çĕрте кулатпăр та. Чĕлхе ăсталăхне, сюжет илемне, геройсен хастарлăхне пула кĕнекери кашни калавран темĕнле асамлă вăй тапса тăрать, вĕсене вуланăçемĕн вулас килет. Çакă ĕнтĕ вăл — писателĕн ăсталăхĕ.

Хăйĕн «Поэта» текен сăввинче:

Ан тив, сана хĕлле хĕвел çунтартăр,
Ан тив, шўтертĕр çумăр раштавра.
Çулла юр кастăр,
Çаптăр,
Чыхлантартăр,
Ўкертĕр тăвăл уяр кун уйра...
Темле пулсан та, пурпĕр чĕрўне
Ан пар тĕтреллĕ тунсăх аллине.
Поэт тени курма-туйма пултартăр
Пур вăхăтра та САМАНА чунне...—

тесе çырать А. Галкин. Тĕрĕс калать поэт-коммунист. Ун пек çырма унăн тивĕçĕ те пур. Вăл хăй — самана сассиллĕ поэт. Унăн творчество çулĕ сулăн-

кăсăр, пĕр тикĕс, тӳрĕ, уçă. Вăл, хăшпĕрисем пек, суя чапшăн çунмасть, пултарулăх ĕçне чăн-чăн совет çыннин куçĕпе, интернационалист-коммунист куçĕпе курать, парти принциплăхне хăйĕн куллен-кун ӳссе-сарăлса пыракан пултарулăхĕнче яланах çирĕп упрать.

Аллă çул — паллă çул, терĕмĕр. Çур ĕмĕр... Поэтăн çуначĕ анлăн сарăлса çитнĕ вăхăт... Çакна Александр Галкин ĕçпе кăтартать — вулакансене çĕнĕ произведенисем парсах тăрать. Çав хушăрах обществăлла пурнăçа та активлă хутшăнать. Вăл — «Тăван Атăл» журналăн главнăй редакторĕ, Чăваш АССР писателĕсен Союзĕн правлени членĕ, КПСС хула комитечĕн членĕн кандидачĕ, райсовет депутачĕ, Культура министерствин художество совечĕн членĕ тата ыт. те. А. Галкин часчасах вулакансемпе тĕл пулать, литература эрнисене хутшăнать, радиопа, телевиденипе калаçать. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл икĕ хутчен Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп грамотине, Чăваш АССР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ятне илме тивĕç пулчĕ. Çакă пире, унăн талантне хисеплекенсене, унăн пултарулăхне юратакансене, чунтан савăнтарать, поэт малашне те пурнăçпа тачă çыхăнса ĕçлессе, паха произведенисем çырасса, пысăк ӳсĕмсем тăвасса шантарать.

*Юхма Мишши*